УТĂ,17: ЭТНОГРАФ КУНĔ

Çинçе вăхăтĕнче çĕре тытма юраман

Чăваш халăхĕн пурнăçне, историне, йăли-йĕркипе культурине тĕпчес тĕлĕшпе вун-вун кĕнеке, ăслăлăх ĕçĕ пичетленнĕ. Вĕсем тăван халăхăн хайне евĕрлĕхне ăнланма пулăшаççĕ. Чăваш этнографийĕ епле аталанса пыни çинчен пире Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн истори енĕпе ертсе пыракан ăслăлăх ĕçченĕ, этнологи секцийĕн ертӳçи, истори наукисен кандидачĕ Димитрий ЕГОРОВ каласа кăтартрĕ.

▶ Ватăсем вырăнти йăла-йĕрке пирки каласа параççĕ.

ЭСИР ПĔЛНĔ-И?

Этнограф кунне Николай Николаевич Миклухо-Маклай çул çӳревçĕ тата этнограф çуралнă кунне халалласа паллă тăваççĕ.

Çĕр çывăрмасăр нумай ĕçленĕ

– Димитрий Владимирович, чăваш халăхĕн йăли-йĕркине, историне тата культурине тĕпчесси мĕнрен пуçланчĕ?

– Эпĕ Муркаш тăрăхĕнчи Çĕньял Муркаш ялĕнче çуралнă. Вăтам класра вĕреннĕ чухнех историпе питĕ кăсăкланаттăм. Малтан Муркаш шкулне вĕренсе пĕтертĕм. Унтан хамăр патрах лицейра ăс пухрăм. Кĕмĕл медальпе вĕренсе тухрăм. Манăн профильпе университета вĕренме кĕме пĕр экзамен кăна тытмаллаччĕ. «Кĕмĕл медальпе сан валли пур çĕрте те çул уçă», – тетчĕç мана. Эпĕ вара И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн истори факультетне вĕренме кĕтĕм. Кунта 5 çул ăс пухрăм. Университета хĕрлĕ дипломпа вĕренсе пĕтерсен археологи, этнографи тата регион историйĕн кафедра пуçлăхĕ Николай Петров тата вĕрентекенсем мана аспирантурăна вĕренме кĕме сĕнчĕç. Килĕшрĕм. Хамăн та преподаватель пулас килетчĕ. Аспирантурăра 2006-2009 çулсенче ăс пухрăм. Хыççăн кандидат диссертацине хӳтĕлерĕм. Аспирантурăра вĕренме пуçласассăнах эпĕ университетра студентсене Чăваш Ен историпе культурине, Раççей историне, Атăлçи тата Урал тăрăхĕнчи халăхсен этнологине, тĕнĕсене вĕрентрĕм.

Ытларах эпĕ XIX-XX ĕмĕр пуçламăшĕнчи тапхăрпа кăсăкланатăп. Çак енпе эпĕ нумай ĕç çырнă. Статьясем те, сборниксем те хатĕрленĕ. Эпир гуманитари ăслăлăхĕсен институтĕнче сĕм авалхи историе те, совет вăхăтĕнчине те, хальхи саманана та тĕпчетпĕр.

– Тин университетран вĕренсе тухнăскер студентсене вĕрентме шикленмен-и?

– Паллах, малтан çăмăл пулман. Çĕр çывăрмасăр нумай ĕçленĕ. Программăсем, лекцисем çырнă, семинарсене хатĕрленнĕ, хам тĕллĕн аталаннă, майĕпен çавăн пек ĕçе кĕрсе кайнă. Университетра преподавательте ĕçленĕ чухне малтан ассистент, унтан доцент пултăм. Пĕрремĕш хут 2007 çулта 2-мĕш курс вĕренсе пĕтернĕ студентсемпе этнографи экспедицине кайнăччĕ. Эпĕ практика ертӳçи пулнă. 2015 çулччен пĕтĕм Чăваш Республикипе çӳренĕ. Ял тăрăх кайса ватăсемпе калаçса вырăнти çемье йăли-йĕркине, юрри-ташшине, ял историпе культурине çырса пынă. Мĕнлерех уявсем, йăласем ирттернипе кăсăкланнă. Ĕлĕкхипе хальхи вăхăта танлаштарса мĕнле улшăнусем пулса иртнине тĕпченĕ. Çакна пĕтĕмпех уй тетрачĕсемпе дневникĕсене çырса пынă.

– Хăвăр çырса пынисемпе кайран мĕнле усă куратăр-ха?

– Çак материалсем университетăн археологи, этнографи тата регион историйĕн кафедрин архивĕнче упранаççĕ. Вĕсемпе студентсем диплом ĕçне çырнă чухне, çавăн пекех тĕпчевçĕсем те усă курма пултараççĕ.

Гуманитари ăслăлăхĕсен институтĕнче эпĕ 2016 çултанпа ĕçлетĕп. Эпир экспедицисене уйрăм та, ушкăнпа та çӳретпĕр. 2022 çулта Мари Республикине саккăрăн кайрăмăр. Семеновкăра, Троярта тата Чăваш Утарĕнче пултăмăр. Çак 3 ялта чăваш йăли-йĕркине, историне, культурине тĕпчерĕмĕр. Ватăсем каласа панине сас çыртарса илтĕмĕр, видео ӳкертĕмĕр, сăн ӳкерчĕксем турăмăр. Пĕтĕм материала пухса кашни тĕпчевçĕ уйрăм ĕç çырчĕ. Унтан вĕсене Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн ăслăлăх архивне упрама панă. Ĕçсемпе эпир хамăр та кĕнеке е статья хатĕрленĕ чухне усă куратпăр. Ытти тĕпчевçĕсем те архива пырса кирлĕ информацие суйласа илме пултараççĕ.

– Чăваш халăхне кăна-и е ыттисене те тĕпчетĕр-и?

– Ытларах чăвашсен йăли-йĕркине, историне тата культурине тĕпчетпĕр. Çав вăхăтрах ытти халăхпа танлаштарма та тăрăшатпăр: çармăссемпе, удмуртсемпе, тутарсемпе, пушкăртсемпе, мордвасемпе. Чăваш халăхĕ Атăлпа Урал тăрăхĕнчи халăхсемпе истори, культура, чĕлхе тата тĕн тĕлĕшĕнчен епле çыхăнса тата уйрăлса тăнине пăхса тухатпăр.

Çармăс тата мордва халăхĕсем авалтан эпир халь тĕпленнĕ вырăнта пурăннă. Чăвашсен мăн аслашшĕсем вара Тĕп Азирен, Вăтаçĕр Азирен, Çурçĕр Кавказран Атăл патне куçса килнĕ. Халĕ, тĕслĕхрен, ирçесем Чăваш Республикин кăнтăр тата кăнтăр хĕвел анăç енĕсенче – Пăрачкав, Улатăр тата ытти тăрăхĕсенче пурăнаççĕ.

Чăвашсен этнотерритори ушкăнĕсене ытларах Самар, Ульяновск облаçĕсенче, Тутарстанра, Пушкăртра тĕл пулма пулать. Оренбург облаçĕнче, Пермь крайĕнче, Мускавра, Тюменьре вĕсен шучĕ сахалтарах. Унти чăвашсене те пирĕн институт ĕçченĕсем тĕпчеме тăрăшаççĕ.

«Пирĕн чĕлхе пуян, янăравлă...»

– Паян чăвашла пуплекенсем мĕн чухлĕ?

– 2021 çулхи Пĕтĕм Раççейри халăх çыравĕ тăрăх, çĕршывра 1 млн та 67 пин чăваш пурăнать. Вĕсен шучĕ çултан-çул сахалланса пырать. Сăмах май, 2002 çулта – 1 млн та 637 пин, 2010 çулта – 1 млн та 436 пин çын шутланса тăнă. Малтан 1-мĕш вырăнта – вырăссем, 2-мĕш тутарсем, 3-мĕш украинсем, 4-мĕш – пушкăртсем, 5-мĕш вырăн чăвашсем йышăнса тăнă. Халĕ лару-тăру çапларах: 1-мĕш – вырăссем, 2-мĕш – тутарсем, 3-мĕш – чеченсем, 4-мĕш – пушкăртсем, 5-мĕш – чăвашсем. Мĕншĕн чăвашсен шучĕ сахалланса пырать-ха? Пĕрремĕшĕнчен, паллах, ку демографипе çыхăннă. Ача çуралласси чакса пырать, нумайăн вилеççĕ. Иккĕмĕшĕнчен, чăвашсем вырăсланса пыраççĕ. Экспедицисене кайнă чухне çакна час-часах асăрхатпăр. Ватăсем чăвашла калаçаççĕ, анчах вĕсен ывăлĕ-хĕрĕ чĕлхене ăнланать пулин те унпа сахал пуплет. Мăнукĕсем вара, шел те, пачах чăвашла калаçмаççĕ. Елчĕкре, Патăрьелте, Шăмăршăра тата ытти тăрăхра лару-тăру ку енчен лайăхрах тăк Шупашкар хули çумĕнчи округсенче пурăнакансем хăвăртрах вырăсланса каяççĕ. Çапах кăнтăр тата кăнтăр хĕвел тухăç тăрăхĕсенче чăвашла нумайрах калаçаççĕ. Çурçĕр тата çурçĕр хĕвел анăç тăрăхĕсенче – сахалрах. Апла пулин те пур тăрăхра та пуплеври вырăс сăмахĕсене асăрхама пулать.

Халĕ чăваш чĕлхине вĕренесси ачасемшĕн йывăрлăх кӳрет. Шел те, паян шкулта ытларах вырăсла калаçаççĕ. Çемьере ашшĕ-амăшĕн ачисене чăвашла вĕрентме тăрăшмалла. Çапла çеç хамăрăн тăван чĕлхене сыхласа хăварма пултаратпăр.

Сăмахран, иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсенче троллейбус, автобусра ларса пынă чухне хăшĕ-пĕри чăвашла калаçма та вăтаннă. Халĕ ун пек мар, калаçаççĕ-ха. Ку савăнтарать. Эпĕ хамăн ачасене чăвашла вĕрентме тăрăшатăп. Пирĕн чĕлхе пуян, янăравлă тата çепĕç пулнине ăнлантаратăп.

– Мĕншĕн пĕр сăмаха тĕрлĕ çĕрте тĕрлĕрен калаççĕ? Калăпăр, «кишĕре» анатрисем «кишĕр», тури чăвашсем «шĕкĕнтĕр», «моркка» теççĕ-ха? Çакна мĕнле ăнлантарса паратăр?

– Чăваш халăхĕ 3 этнографи ушкăнĕнчен тăрать: Тури (вирьял), анатри тата анат енчи чăвашсем. Пăлхар-чăвашсем хĕвел анăçра тата çурçĕр хĕвел анăçра пурăнакан финно-угорсен пайне ассимиляциленĕ. Тури чăвашсем йĕркеленме пуçланă. Вăл XIX ĕмĕр çурриччен тăсăлнă. Анат енчисене тĕпчевçĕсем «тĕп чăвашсем» тенĕ. Чăвашсен мăн аслашшĕсем Атăлçи пăлхарсем Атăлăн сулахай енĕнчен Çĕрпӳпе Сĕве хушшине куçса килнĕ, кунта анат енчи ушкăн никĕсленнĕ. Анатри чăвашсем XVI-XVII ĕмĕрсенче йĕркеленнĕ. Вĕсем çурçĕртен, çурçĕр хĕвел тухăç енчен, тĕп районсенчен, Хусан тăрăхĕнчен кунта пурăнма куçса килнĕ. Çак этнографи ушкăнĕсене пула тата çывăхра пурăнакан халăхпа хутшăнăран вĕсен чĕлхи те улшăнса пынă. Анатри чăвашсене тутар халăхĕ вăйлă витĕм кӳнĕ. Тури чăвашсен урăхла диалект, унта çармăссен сăмахĕсене асăрхама пулать. Сăмахран, тури чăвашсем «çитар» теççĕ тĕк анатрисем – «минтер». Çавăн пекех паранкăна «çĕр улми», «улма» тесе калаççĕ. Ку вăл – тутар сăмахĕсем. Унсăр пуçне тури чăвашсем «о» сас паллипе калаçаççĕ: «пор», «çок» теççĕ. Анатрисем – «пур», «çук» тесе калаççĕ.

Тури, анатри, анат енчи чăвашсем уйрăм халăхсем тесе калаймăн. Вĕсем пурте чăвашсем. Анчах кашниех диалектпа, историпе, йăли-йĕркипе, культурипе, çи-пуçĕпе уйрăлса тăрать.

– Чăваш ялĕсенче авалтан пыракан йăла-йĕрке манăçман-и? Халĕ вĕсене пăхăнаççĕ-и?

– Чăвашсем мĕн авалтан тĕрлĕ йăла-йĕркене пăхăннă. Ĕлĕк чăвашсем Çинçе уявне паллă тунă. Ăна Çĕр амăшĕн Туррине халалланă. Çак сăмах «çийĕнче» сăмахран пулса кайнă. Хресчен çуркунне ака тунă. Çĕре хĕрарăмпа танлаштарнă. Çăлкуççенче Çинçе 12 кун пынă тесе çырнă. Виçĕ кунран уйăх таран тăсăлма пултарнине те палăртнă. Çав вăхăтра çĕре тытма юраман. Вăл «хырăмпа» тесе каланă. Çĕре чавма, сухалама, йăрансене çумран тасатма, çĕре патак-юпа тавраш çапса лартма, ун çийĕн çара уран утма-çӳреме юраман. Çинçе уявĕнче шурă кĕпе тăхăннă, ула-чăлипе çӳреме юраман. Уяв вăхăтĕнче халăх каннă. Вăйă картине каçалапа çеç тухнă, ирпе е кăнтăрла – юраман. Çаксене туни çылăх тесе шухăшланă. Турă курсан аçа çапнă, тыр-пула пĕтернĕ тесе ĕненнĕ. Халĕ çак йăла-йĕркене Çĕр праçникĕ теççĕ. Вăл Çимĕк хыççăн тунтикун пулать. Хăш-пĕр вырăнта ватăсем çакна çаплипех пăхăнаççĕ.

– Вырăнти халăхсем мĕнле те пулин тĕлĕнтермĕшсем каласа паратчĕç-и?

– Пĕрре чăваш тухатмăшĕсемпе юмăçĕсен тĕлĕшĕпе еплерех лару-тăру пулнине тĕпчеме тухса кайнăччĕ. Хăш-пĕр районта вĕсем патне халĕ те пулăшу ыйтма çӳреççĕтĕр. Пĕрре Муркаш тăрăхĕн хĕрарăмĕ каласа панăччĕ: унăн килĕ умне тухатмăш карчăк çăмарта пăрахса хăварнă тет. Хĕрарăм ун пек япаласене çара алăпа тытма юраманнине пĕлнĕ. Вăл çĕтĕк-çурăкпа усă курса вĕсене банкăна хунă та виткĕчпе хупнă. Çав тухатмăш карчăк ун патне тĕлĕке килнĕ. «Мана йывăр, банкăран кăлар-ха! Вĕлерен вĕт, вĕлерен!» – тесе каланă тет тухатмăш карчăкĕ. Хĕрарăм банкăна уçман. Темиçе уйăхран тухатмăш карчăк вилсе кайнă тет.

Мари Республикинчи Чăваш Утарĕнче тепĕр хĕрарăм вĕсен ялĕнче тухатмăш карчăк пурăнни çинчен каласа панăччĕ. Вăл усал ĕç тусан пӳрт тăрринчен тĕтĕм тухать тесе ĕненнĕ. Унран хăранă. Хăш чухне урамра сысна чупса çӳренине курнă. Вăл тухатмăш карчăк тесе шухăшланă. Пĕрре çапла ялти çынсем сысна хыççăн хăваласа чупнă, ăна хулăпа ыратмаллах çапнă тет. Тепĕр кунне тухатмăш карчăк хăйĕн килĕнчен тухман, сусăрланнă-мĕн. Чăнах, ĕлĕкхи хутсенче тухатмăшсем кушак, йытă е сысна пулса çăвасем тăрăх çӳренине палăртнă. Тĕрлĕ çăл куçра вĕсем çичĕ масар таран çӳренĕ тесе те çыраççĕ.

Юлия ИВАНОВА калаçнă.

Димитрий ЕГОРОВ архивĕнчи сăн ӳкерчĕк.